Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă. | N 49-50 (4619) | 1998 çулхи май (çу) уйăхĕн 6-мĕшĕ, юнкун | Палăртнă хакпа.

## Çурхи кун çулталăк тăрантать

## Кашни сехет хаклă

(“Тухăç - 98” пресс-центр пĕлтерет)

**Кая юлса килнĕ çуркунне çĕр ĕçченĕсене васкатать. Районта хирти ĕçсене тытăнман хуçалăх çук. Ĕнерхи кун тĕлне нумай çул ӳсекен курăксен мĕнпур лаптăксен 45 проценне сӳреленĕ тата апатлантарнă. Кĕрхи культурăсен акнă участокĕсен пĕрре пиллĕкмĕш пайĕ çинче те çавăн пек агромероприятисемех пурнăçланă.**

**Мичурин ячĕпе хисепленекен, “Урняк”, Кузнецов ячĕпе хисепленекен, Элмет кустĕнчи, “Рассвет” хуçалăхсенче нумай çул ӳсекен курăксен лаптăкĕсен çуррине ытла ĕçлесе хатĕрленĕ. “Татарстан” хуçалăхра ку ĕçе пĕтĕмпех пурнăçланă, “Алга”, “Кондурча” ассоциацисенче кĕрхи культурăсене çуррине яхăн сӳреленĕ тата апатлантарнă.**

**Нӳрĕк тытас ĕç хăвăртлăхĕ те кунсерен ӳссе пырать, вăл хальхи вăхăтри чи кирлĕ агромероприятисенчен пĕри шутланать. Юлашки кунра çак ĕçе пилĕк пин гектар çинче пурнăçланă, тĕпрен илсен - мĕнпур лаптăксен пĕрре пиллĕкмĕш пайĕ çинче. “Кондурча”, “Киклĕ” хуçалăхсенче, çаплах Элмет кустĕнче нӳрĕк тытас ĕç пысăк хăвăртлăхпа пырать.**

**Хуçалăхсенче çаплах çурхи культурăсен вăрлăхĕсене акас умĕн инкрустацилеççĕ, ĕнерхи кун тĕлне 3 пин тонна ытла акмалли материал хатĕрленĕ. Хресченсен хуçалăхĕсен Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕнче районта пĕрремĕшĕсем пулса тулă, “Алга” хуçалăхра вара сӳреленĕ хыççăн тӳрех урпа акма тытăннă.**

## Кун йĕркинче - çурхи ĕçсем

Майăн 4-мĕшĕнче район администрацийĕнче иртнĕ ĕçлĕ калаçу хирти çурхи ĕçсен программине ытларах аса илтерчĕ. Ăна хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин ертсе пычĕ.

- Питĕ яваплă кунсем пуçланчĕç. Çурхи акана ытти çулхисенчинчен 15 кун каярах тытăнтăмăр. Иртнĕ çул эпир пуян тухăç илме пултарнине кăтартрăмăр, çавăнпа та кăçал та пĕр гектартан 40 центнертан кая мар тухăç илме тĕллев тăратмалла.

Çак задачăна пурнăçлас тесен лайăх кунăн кашни сехечĕпе, кашни минучĕпе тухăçлă усă курмалла, тесе палăртрĕ вăл. Çавăнпа та техникăна талăкĕпех ĕçлеттерессине йĕркелемелле, тракторсене горючипе хиртех тивĕçтермелле, кашни агрегата яваплă çынна çирĕплетмелле, ака технологийĕн пĕтĕм требованийĕсене пăхăнмалла, кĕскен каласан, çурхи ака кампанине йĕркеллĕ те паха ирттерме пур мерăсемпе те усă курмалла. Ĕçре йывăрлăх сиксе тухнă хуçалăхсене пулăшмалла.

- Çурхи ака кампанине чи нумай 15 кун уйăрма пултаратпăр, çак срокра ĕлкĕреймесен эпир нимĕн те пуçтарса илеймĕпĕр, валеççе те параймăпăр, - терĕ Фатих Саубанович хăйĕн сăмахне пĕтĕмлетсе. Çĕр ĕçченĕсене вăл ăнăçлăхсем сунчĕ.

Юлашкинчен Сибагатуллин юлташ хуçалăхсенче ирттернĕ реорганизацисем тата хăш-пĕр кадрсене куçарни çинчен пĕлтерчĕ.

Çураки кампанине оперативлă ирттерес тĕллевпе администраци çумĕнче администраци пуçлăхĕ Ф.С.Сибагатуллин ертсе пынипе район штабĕ йĕркеленĕ.

## Идеологсем канашларĕç

*Майăн 4-мĕшĕнче хулапа район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Ф.Р.Ногуманова ертсе пынипе идеологи штабĕн канашлăвĕ иртрĕ. Кун йĕркинче çурхи ака тапхăрне идеологипе тивĕçтерес ыйтăва кĕртнĕччĕ.*



## Туслă, килĕштерсе

**<u>Кăçал уй-хир ĕçĕсем ансат мар тата хăйне евĕр тытăнчĕç. Кăçалхи ял хуçалăх çулĕнче тырпул ӳстерекенсем умĕнче тăракан задачăсем, тухăç ситĕнтермелли условисем çинчен ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн çĕр ĕç пайĕн начальникĕ Н.М.МУСИН каласа парать.</u>**

- Пĕлтĕр çĕр ĕçченĕсем район историйĕнче пулман тухăç пухса илчĕç: кашни гектартан 46,2-шер центнер. Эпир хамăрăн çĕрсен потенциалне, хамăрăн ĕçченсен чăн-чăн майĕсене пĕлетпĕр пулсан, халь пирĕн çĕнсе илнĕ чикĕсенчен чакма юрамасть. Çавăнпа та пĕлтĕрхи шайра тытăнса юлас тесен, пирĕн уйрăмах тăрăшса, çурхи кунăн кашни уяр кунĕпе тухăçлă усă курса ĕçлемелле. Пысăк тухăç пухса илме условисем вара пирĕн çителĕклĕ. Кĕркуннеренех 12649 гектар çинче кĕрхи культурăсем акнă. Тăпрана кĕркунне ĕçлесе хатĕрленĕ чухнех кашни гектар пуçне витĕм кӳрекен веществосем çине куçарса шутласан, 1432 тонна удобрени кĕртнĕ. Вăрлăх хатĕрлессине те пысăк тимлĕх уйăрнă. Çапла, кĕркуннерен 136 пин тонна ытла вăрлăх хывнă, ăна хамăр патра ӳстернĕ, ку паха та шанчăклă вăрлăх. Унăн 82,8 проценчĕ 1-2 класс требованийĕсемпе килĕшсе тăни те савăнтарать.

Минераллă удобренисем хатĕрлессипе эпир çуркунне те ĕçлерĕмĕр. Кĕркунне апатлантарнине шута илсен - майăн 1-мĕшĕ тĕлне витĕм кӳрекен веществосем çине куçарса шутласан, сухаланă çĕрĕн пĕр гектарĕ пуçне вăтамран 127-шер килограмм удобрени хатĕрленĕ. Ку пĕлтĕрхи çак шайпа танлаштарсан, 9 килограм ытларах шутланать. Çав вăхăтрах ӳсентăрансене хурт-кăпшанкăсемпе çумкурăксенчен хӳтĕлемелли хатĕрсем çителĕклĕ упранă.

Финанспа экономика лару-тăрăвĕ йывăр пулнине пăхмасăр, хуçалăхсем çак тапхăра кирлĕ ял хуçалăх техникине паха юсанă, хатĕрлĕх линейки çине тăратма пултарнă. Хире тухас умĕн пĕр-пĕрин хушшинче ирттернĕ тĕрĕслевсем кăтартнă тăрăх, ака тĕлне культиваторсен 84 процентне хатĕрленĕ, сухалакан тракторсен - 82 процентне, сеялкăсен - 91, сӳресен - 97 процентне. Специалистсемпе механизаторсен вĕренĕвĕ, çураки умĕн йĕркеленĕскер, тĕрлĕ инструктажсем çаплах кăçалхи çуркунне условийĕсенче ĕçсене пĕлсе пурнăçлама пулăшма тивĕçлĕ. Тăпрара нӳрĕк те кĕркуннерен нумай юлнă - 171 миллиметр, ку нормăран 36 миллиметр ытларах.

Анчах çуркунне пуçлансанах кĕтменлĕхсемпе тĕлĕнтерчĕ. Пĕрремĕшĕнчен, вăл кая юлса килчĕ. Уй-хир ĕçĕсене ялан тенĕ пекех апрелĕн 18-20-мĕшĕсенче пуçланă пулсан, кăçал пĕрремĕш агрегатсем хире апрелĕн 28-мĕшĕнче кăна тухрĕç. Çавăнтах кĕрхи культурăсем япăх хĕл каçни палăрчĕ. Çавăнпа та хуçалăхсене васкавлă ревизи ирттерсе, калчасене гектар пуçне 3-шер центнертан кая мар шутран азотлă удобренисемпе тымартан апатлантарма тӳр килчĕ. Ытларах сиен тӳснĕ анасене хушса акассине те вăраха тăсмалла мар.

Иккĕмĕшĕнчен, хуçалăхсенчен чылайăшĕнче кукурузăпа чĕкĕнтĕр анисем юр айне сухаланмасăр юлнă, çавăнпа та çак участоксене дисклă сӳресемпе ĕçлесе хатĕрлесси çĕр ĕççенĕсемшĕн хушма йывăрлăхсем кăларса тăратрĕ. Ĕç калăпăшĕ вара пĕчĕккĕ мар: çуракине 56 пин гектарлă лаптăк çинче ирттермелле. Кая юлса килнĕ çуркунне вара çак ĕçсене чи кĕске вăхăтра пурнăçлама хистет. Ун пек тăвас тесен техникăна икĕ сменăпа ĕçлеттермелле, çав вăхăтрах нӳрĕк те тытса хăварма тăрăшмалла. Кунта вара Мазитовăн анлă илекен культиваторĕсемпе пĕлсе усă курни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Иртнĕ çулхи пекех, вăрлăхсене инкрустацилесе акмалла. Тĕштырăсем хушшинче кăçал çурхи тулла ытларах тимлĕх уйăрмалла. Акмалли структурăра улшăнусем пулмаççĕ пулин те, таварлăх енчен пысăк пĕлтерĕшлĕ пĕрчĕллĕ культурăсене ытларах акмалла. Çурхи тулла пĕр енне кăна акмалла пулать, акмалли норма - пĕр гектар çине 7 миллион пĕрчĕ. Сахăр кăшманне ялан-хи пекех 6560 гектар акмалла. Ытти çулсенчипе танлаштарсан, тутлă тымарăн 5000 гектарне сахăр заводĕнчен 30 километртан инçех мар вырнаçнă хуçалăхсенче акĕç. Французсен технологийĕпе те сахăр кăшманне 900 гектар çине акĕç. Халь çак анасем 2500 гектар шутланаççĕ. Çак мĕнпур ĕçе “Нурлатсахар” кооператив пурнăçлĕ.

Хуçалăх хирĕсенче ĕç хĕрсе пырать. Çĕр ĕлкĕрнине сăнаса тăрса, вăхăта сая ямасăр, хирти çурхи агромероприятисене хăвăрт та паха пурнăçлама тăрăшмалла. Ку вăл - хальхи вăхăтри пысăк задачăсенчен пĕри. Халь тухăç шăпине татса параççĕ. Çĕр ĕçченĕсем хирти çурхи ĕçсене кăçал та тăрăшса пурнăçласса, хăйсене ĕçре кăтартасса шанатпăр. Иртнĕ çулхи пуян тухăç та çĕр ĕçченĕсем ырми-канми ĕçленин результачĕ вĕт.

Анонс

## Сенкер экран çинче - Нурлат районĕ



**Ку эрнере Тутарстан телеканалĕ пирĕн район çинчен передачăсем кăтартма чылай вăхăт уйăрнă, çавăнпа та тимлĕ пулăр: программăпа паллашса телевизор умне вăхăтлă пуçтарăнма ан манăр.**

**Шăматкун “Залида” передачăна тепĕр хут кăтартĕç.**

**Майăн 10-мĕшĕнче ирхине “Чулпан” передачăра Астăвăм Кĕнекин презентацине курма пултаратăр.**

**Майăн 12-мĕшĕнче те “Чулпан” передачăра йĕркеллĕ пурнăç темине халалланă тĕлпулăва кăтартĕç.**

## Пассажирсене пĕлсе тăма

Хусан-Нурлат поезд расписанийĕ улшăннă: майăн 25-мĕшĕччен вăл Нурлатран мăшăрсăр (!) кунсенче çӳрет, унтан чугун çулĕн Горьковски уйрăмĕ çӳремелли çĕнĕ график çирĕплетĕ, ун çинчен вара каярах пĕлтерĕпĕр.



# Майăн 7-мĕшĕ - Радио кунĕ




## Чĕрĕк ĕмĕр пĕр вырăнта

*"Çын тата унăн ĕçĕ" рубрика Алевтина Сиплатовапа паллаштарма питĕ меллĕ. Вăл суйласа илнĕ професси хĕрарăмăнах мар та-ха, анчах Нурлат районĕнчи электричество çыхăнăвĕн узелĕн тĕп АТСĕн аслă электромеханикĕшĕн унăн ĕçĕ пурнăçĕнче тĕп вырăн йышăнать. Кунта вăл амăшĕ, Вера Игнатьевна, сĕннипе килнĕ. Вăл чылай çул хушши РУС тĕп кассине илсе пынă. 1966 çулта Алевтина шкул вĕренсе пĕтерсен дежурнăй электромеханик пулса ĕçлеме тытăннă. Çулталăк вăй хунă хыççăн Красноярска кайса завода ĕçе вырнаçнă. Анчах та тăватă çул иртнĕ хыççăн ăна тăван кĕтес хăйĕн патнех туртнă... Хусанти çыхăну техникумне куçăмлă вĕренсе пĕтернĕ хыççăн 25 çул ĕнтĕ çыхăнăвăн йывăр наукине ĕçре алла илет.*

*- Паллах ĕнтĕ, маларах ĕçлеме çăмăлрахчĕ, - тет Алевтина Елисеевна. - 12 каналлă аппаратурăна 120 каналлипе танлаштарсан, уйрăмлăх çĕрпе пĕлĕт пекех, алă ĕçне автоматика пĕтĕмпех улăштарчĕ. Аппаратурăпа вара тимлĕ те çаврăнăçуллă пулмалла.*

*Ялсенчи станцисем хушшинчи çыхăну линийĕсене, абонентсене кулленех тĕрĕслесе тăрассине, монтерсемпе пĕрле ĕçлессине тата схемăсене тимлĕ тишкерессине - кусене пурне те Сиплатова электромеханик пурнăçлама пултарать. Тӳрĕ кăмăллă та яваплă пулни вара производство процесне пĕлсе йĕркелеме пулăшать. Коллективра та ăна хисеплеççĕ.*

*- Пĕлетĕр-и вăл мĕнпе уйрăлса тăрать? Ĕçе вĕçне çитерес тесе тăрăшнипе, - теççĕ Сиплатова çинчен ĕçтешĕсем - В.В.Илларионов инженерпа аслă электромеханик В.М.Логинова. Пирĕн шоферсенни пекех вĕт: кăлтăксене вăхăтлă тӳрлетмелле, пурне те хатĕрлемелле, профилактика ĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçламалла - ун чухне вара ĕç йĕркеллĕ пырĕ...*

*Йăлара та Алевтина Сиплатова çухалса каймасть: утюг та юсать, розетка та вырнаçтарать, электровилка çĕнĕрен тăвать, паллах ĕнтĕ, кулленхи ĕç-хĕл те ун çинче.*

*Ĕçе хĕрарăмсен тата арçынсен профессийĕсем çине уйăрни тĕрĕс-ши вара?*

## Районти электричество çыхăнăвĕн узелĕ: тенденцисем, проектсем

**Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне районти çыхăну узелĕ электричество тата почта çыхăнăвĕсене уйăрас ĕç вĕçленнĕ. Халь вĕсем хăйсем тĕллĕн ĕçлекен икĕ управлени. Вĕсен кашнин хăйĕн счет, структура, штат расписанийĕ, ыйтăвĕсем... Задачисем вара малтанхисемех юлаççĕ: халăха çыхăну услугисемпе лайăх тивĕçтерессе.**

- Электроçыхăнăва почта çыхăнăвĕнчен ытларах укçа кирлĕ , - тет РУЭС начальникĕ Рашид Анварович Зиганшин. - План тăрăх аталанмасан, хальхи вăхăтри çĕнĕ аппаратурăпа оборудовани пулмасан, паллах ĕнтĕ тата хушма укçа-тенкĕсĕр çыхăнăвăн малашлăхĕ пулма пултарайĕ-и вара? Çавăнпа та Тутарстан Республикин Çыхăну министерстви малашне лайăх пуласса шантаракан проект планланă. Пирĕн министерствăн структуринче халь виçĕ управлени - "Таттелеком", "Татарстанпочтасы" тата радиопа телевизор сечĕсем. Пирĕн РУЭС пĕрремĕшĕн составне кĕрет. Хуласем хушшинчи, хулари, ялти, телеграф çыхăнăвĕ, радиопа тивĕçтерессе - çакна пĕтĕмпех РУЭС пурнăçлать.

Коллективра 126 единица шутланать - вĕсенчен чылайăшĕ çамрăксем, хресченсен хуçалăхĕсен ассоциацийĕсемпе бюджет организацийĕсен телефон услугисемшĕн тӳлемелли парăмĕсем (деноминацилемен укçапа 1 миллиард та 400 миллион тенкĕ), ĕçлесе илнине кашни уйăхра тӳлесси тата кăçалхи çула палăртнă пысăк плансем. РУЭСăн ĕçлĕ планĕсенче Нурлат-Çарăмсан хушша кабель тăсасси, ăна вĕçленĕ хыççăн çаврăнăç çыхăнăвĕн начар мар вариантне пурнăçлама май парать. Халь ăна Нурлат-Чистай-Хусан схемăпа пурнăçлаççĕ, линире Нурлат связисчĕсенчен килмен кăлтăк пулсан, район республика çыхăнăвĕсĕр тăрса юлать. (Майăн 1-мĕшĕнче шăпах çапла пулса тухнă). Ун пек чухне эпир Анат Кама зонине тухма пултаратпăр - акă пĕр вăхăтрах ĕçлекен тепĕр канал. Йывăр та мар ĕнтĕ, шанчăклă, анчах та... укçа-тенкĕ кирлĕ. РУЭС ертӳçисем ăна илес тесе çине тăрса тăрăшаççĕ. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ тĕп АТСа улăштарас тесе çӳреççĕ. Хусанти служба кабинечĕсенче çак ыйтупа миçе хут пулнине связистсем хăйсем çеç пĕлеççĕ.

- 2-мĕш АТСра транзит узелĕ çукки питĕ хумхантарать, - ăнлантарса парать Р.А.Зиганшин. - Станцин ĕçĕ питĕ нумай: хулари çыхăну, ялсенчи 24 АТС, микрорайонсенчи коммутаторсем, 4090 номерлĕх 5-мĕш АТСра та ĕç çителĕклех. Транзит узеллĕ цифра АТСĕ - лару-тăрăва татса памалли пĕртен-пĕр çул-йĕр.

Çыхăну министерствин специалисчĕсем проекта хатĕрлесе çитернĕ. Техникăпа экономика никĕсне юлашки тӳрлетӳсем кĕртеççĕ. Çĕнĕ станцие монтажлакансем те тупăнĕç. Хальхи вăхăтра тĕп ыйтăва - оборудовани туянма кам укçа-тенкĕ уйăрса парассине активлă сӳтсе яваççĕ, район тăкаксен пĕр пайне хăйĕн çине илессе связистсем шанаççĕ.

Кĕскен каласан, çак ĕçлĕ пуçарусене аталанма пулăшсан, связистсем пире, абонентсене, кирлĕ ĕçре çĕнĕ ӳсĕмсем тăвĕç. Вĕсем вара хăйсен ĕçне пĕлеççĕ, çавăнпа та яланах пире пулăшĕç.

**Т.АЛЕКСЕЕВА.**

## Ярмăркка шавлă иртрĕ

Çав кун Гиматдинов ячĕпе хисепленекен урамра суту-илӳ хĕрсе пычĕ. Çурхи ярмăркка мĕнпе палăрса тăрать-ха? Суту-илӳ ларекĕсем çинче тĕрлĕ тĕслĕ шарсем вĕлкĕшнипе-и? Çӳлĕксем тĕрле таварсемпе пуян пулнипе-и? Шашлык шăрши таврана сарăлнипе-ши?

- Çук, мĕнпурĕ çуркунне, çуркуннехи кăмăл-туйăм лайăх пулнипе.- Халь пасарта та тавар питĕ нумай. Апла пулин те ярмаркkăна каяс килет, кунта уяври пекех вĕт.



Ку чăннипех çапла. Çав кун сутуçăсем тавар туянакансене таратлăн, кăмăлпа тивĕçтерчĕç. Райпо, НГДУ, чугун çул, вăрман хуçалăх ОРСĕсем халăха промышленность тата апат-çимĕç таварĕсен анлă ассортиментне сĕнчĕç. Кăшт аяккинерех аш-какай комбиначĕн, сахăр завочĕн, 53-мĕш номерлĕ строительствăпа монтаж управленийĕн, "Надежда" патшалăх предприятийĕн магазинĕсем хĕрсе суту турĕç. Хирти ĕçсем тытăннине пăхмасăр, хресченсен хуçалăхĕсем те хула çыннисене хăйсен продукчĕсемпе савăнтарма вăхăт тупрĕç. Çапла, хресченсен хуçалăхĕсен Синдряков ячĕпе хисепленекен, "Элмет", Хафизов ячĕпе хисепленекен, "Çуткӳл", "Кондурча", "Рассвет" ассоциацийĕсен ĕçченĕсем йӳнĕ аш, сĕт, хăйма тата ытти апат-çимĕç сутрĕç.



Çав кун ярмăрккăна çĕнĕ организаци - маркетинг тĕлĕшпе департамент та хутшăнчĕ.

Уйрăм сутуçăсем те питĕ нумайăнччĕ, вĕсем çынсене тĕрлĕ таварсем сĕнчĕç.

- Ярмăрккăра 10 пине яхăн тенкĕлĕх сутрăмăр,- терĕ чугун çул ОРС начальникĕ И.С.Сафиуллин. Кĕскен каласан, ярмăркка халăхшăн та, сутуçăсемшĕн те усăллă иртрĕ. Тен, чăннипех сăлтавĕ çурхи кăмăл-туйăмра пулĕ? Çаплах кунта сцена искусствин вырăнти ăстаçисем кăтартнă концерт та пурне те килĕшрĕ.




**С.НУРУЛЛИНА.**

Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕсем.

# Ăста çуркунне иртерех килет

Эсир, паллах, çуркунне çитни ăста маларах сисĕнни çинчен пĕлетĕр ĕнтĕ. Тĕрĕс, теплицăра, кĕленче "тӳпе" айĕнче çулталăкри тăватă вăхăт чиккисем вырăнтан куçнă пек туйăнать, унта вара тĕп тĕс - симĕс. Илемлĕх çинчен кунта пĕтĕмĕшлĕн сӳтсе явма хăнăхман. Нӳрĕ сывлăш шăрши кĕрет, тулăх çĕр хăйне кирлĕ чухлĕ шыв илнĕ ĕнтĕ...

Çак 15 сотка уйăрнă икĕ пӳлĕмрен пĕринче чечексем хуçаланаççĕ, тепринче - пахча çимĕç. Каллăсем ешереççĕ, часах чечеке ларĕç. Такам илсе килнĕ герань чечекре тата маргаритксен кĕрен тĕсĕ куçа илĕртет, нарциссем çутă енне тăсăлаççĕ. Унтан, май уйăхĕнче, каллăсене çулса илĕç, анчах çутă хĕрлĕ каннăсем вăй пухĕç тата розăсем паппкана ларĕç... Тепĕр тесен, "Нурлатнефть" управленин теплицинчи чечексемсĕр хулара уяв сайра иртет.

Купăста, "Волгоградец", "Дар Ташкента" пăрăç тата помидор калчисем ӳсекен ещĕксене тирпейлĕ лартса тухнă. Теплица сукмакĕ шаларах илĕртет, унта пĕрремĕш помидорсем тĕвĕленеççĕ тата çулçă ăшĕнче ешĕл хăярсем курăнаççĕ. Кунта хăйсем тĕллĕн шăркаланакан "апрельские" тата "московские" сортсене акса ӳстереççĕ. Помидорсен "Де Барао", "Красная стрела" тата "Украинские" элита сорчĕсене куçарса лартнă. Тĕрлĕ ешĕл ӳсентăран - укроп та, петрушка та, сельдерей те, çулçăллă салат та...

Кăçал çуркунне васкамасть, çапах теплица ĕçченĕсен Ирина Тайбулатовапа Ольга Морозован тата Рушания Замалетдинован пушă вăхăчĕ кăшт та çук. Çĕре чавса тухмалла, тислĕке салатмалла, вăрлăхсене вăхăтлă акмалла, шăвармалла, калчасене куçармалла, купаламалла, çумламалла... Çак пысăках мар звенон ĕçĕ кунсерен 7 сехетрен тытăнать. "Нурлатнефть" НГДУ УКРЗС начальникĕ Ш.Г.Ягудин вĕсем çинчен çаппла каларĕ: "Ĕçлеççĕ - тăрăшаççĕ. Вĕсем пирки ыйтусем çук".

Хĕрсем вара мухтавшăн мар тăрăшаççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне тӳрĕ кăмăлпа, тĕплĕ те тимлĕ пурнăçлама хăнăхнă.

**Т.АЛЕКСЕЕВА.**

*Администрацире*

# Хула-тăк, хулари пек пулмалла

Нурлата республикăна пăхăнса тăракан хуласен категорине кĕртнĕ май, хулапа район ертӳçисем çав решение пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе активлă ĕçлеççĕ. Çак ĕçĕн çул-йĕрĕсенчен пĕри законсăр тунă гаражсене вырăнтан куçарасси пулса тăнă. Район администрацийĕ çумĕнчи административлă комисси ларăвĕнче, апрелĕн 22-мĕшĕнче пулнăскерте, "хăйсен ирĕкĕпе хуралтăсемпе гаражсем тăвакан" граждансем тĕлĕшпе мерăсем йышăнас ыйтусене пăхса тухнă. Ун пеккисем Карл Маркс проспектĕнчи 1,5,9,3-мĕш, Козлов урамĕнчи 12-мĕш, Гагарин урамĕнчи 12-мĕш, 60 лет Октября урамĕнчи 11-мĕш, Карл Маркс урамĕнчи 6-мĕш çуртра пурăнакансем хушшинче уйрăмах нумай иккен. Комисси вĕсен ăнлантарăвĕсене итленĕ, анчах вĕсем тĕрĕс пулнине çирĕплетмен. Мĕншĕн тесен вĕсенчен хăшĕ-пĕрин лайăх гараж тума уйрăм участок пур, ыттисем ку тĕллевпе ятарласа уйăрнă вырăнсенче, сăмахран, ретранслятор, тасатакан сооруженисен, апат-çимĕç комбиначĕн территорийĕсенче, чугун çул микрорайонĕнче участок илме пултараççĕ. Унсăр пуçне, лайăх гараж хăпартса лартма вăй çитермен граждансене çуна çинче гараж тума кивĕ подстанцирен, тиев картишĕнчен инçех мар участоксем уйăрса парĕç. Акă çавăнпа та 40 гражданран 32-шне, хула ертӳçисен решенине пăхăнмасăр, хăйсен ирĕкĕпе гараж тунăскерсене, чи пĕчĕк ĕç укçин çурри чухлĕ штраф панă, 8 çынна - асăрхаттарнă, çаплах гаражсене вăраха тăсмасăр куçарма хушнă.

Комисси çак предписание пурнăçлама 2 эрне панă. Çакă та ыйтăва татса пама пулăшмасан, ĕçе çĕр ресурсĕсемпе çĕр реформи тĕлĕшпе ĕçлекен район комитетне е прокуратурăна параççĕ. Унта вара шансах тăр: штраф санкцийĕсем хакла ларĕç.

# Пурнăçа пурăнса ирттересси

Кӳршĕ-пулăçă ахаль чухне кӳлĕ хĕррине Михаилтан каярах килекенччĕ. Паян вара уроксем хыççăнах пырса çитрĕ.

- Михаил Ефимович, лайăх хыпар! - хавхаланса калаçма пуçларĕ учитель-историк Август Иванович Матросов, облаçра тухса тăракан хаçата уçса. - Эсир Жидков хушаматлă çынна пĕлетĕр-и?

- Жидков? - аса илме пуçларĕ Михаил. - Чимха, чим, Александр Иванович мар-и?

- Çапла. Вăл сире шырать.

- Вăл манăн командир, танк экипажĕн командирĕ.

...Вăлтасем çинчен мансах, Михаил Ефимович "Советская Татария" хаçата тытрĕ. Кунта "Ăста-ши эсир пĕр полкри юлташсем" пайра темиçе йĕрке пичетленĕ. "А.Жидков. Хăйĕн экипажĕн членне Михаил Прыткова, вăрçăччен Тутарстанта пурăннăскере, шырать".

- Почта васкамалла! - терĕ шурă çӳçлĕ салтак, тăнă май.

- Ăста сире. Эпĕ хамах чупăп, - терĕ учитель.

... Пĕр талăк та иртмерĕ, Прытков васкавлă телеграмма илчĕ: "Çула тухатăп".

Çапла, 40 çул иртсен тĕл пулчĕç вăрçăри икĕ юлташ: Михаил Ефимович Прытковпа Александр Иванович Жидков.

Тĕлпулу ĕмĕрлĕхе асра юлчĕ. Тутарстан Республикин Октябрь районĕнчи Пӳлеркӳл ялне, Воронеж облаçĕнчи Контемировски районĕнчи Михайловка ялĕнчен вăрçă вăхăтĕнче танк командирĕ пулнă çын килнĕ.

* * *

Михаил Прытков иртнине яланах аса илнĕ. Вăрçă çинчен вăл ачисене, мăнукĕсене, шкулта вĕренекенсене, юлташĕсене яланах каласа панă. Вăл окопра мар, танкра тăшмана хирĕç кĕрешнĕ.

Çамрăк салтак тăшманпа хастаррăн çапăçнă, хăй каланă пек "Курск пĕккине" тӳрлетнĕ. Экипаж пĕрпĕринпе килĕштернĕ, танкистсем пĕр-пĕрне çур сăмахранах ăнланнă. Тăшмана пĕтерес тесе хăйсенчен киллнине пурне те тунă. Анчах та вĕсен танкне сирпĕтнĕ. Прытков аманнă.

Сипленсе çитсен каллех фронта. Халь ĕнтĕ Англире туса кăларнă "Унистон Черчиль" танкĕпе Псков çывăхĕнче çапăçнă.

- Пĕррехинче, нимĕç танкне çĕнтерсе хамăр серепене лекрĕмĕр, - каласа парать Михаил Ефимович. - Гусеница тухса ӳкрĕ.

- Машинăна хăварма тӳр килет, анчах та каçчен тытăнса тăмалла, - тенĕ Жидков.

Танка хăварнă хыççăн вĕсене тăшмансем пеме пуçланă. Сасартăк Михаил урине амантнине туйнă. Танк командирĕпе радист ăна вутçулăм айĕнчен илсе тухнă.

... Кайран Кироври



госпиталь.

* * *

Госпитальте ултă уйăх выртса тухнă, виçĕ йывăр операци тӳссе ирттернĕ, сылтăм урине чĕркуççинчен çӳлерех каснă.

Çапла ăна тăван ене илсе килнĕ.

Нурлатран ăна килне ашшĕ хăйĕн ĕнине кӳлнĕ лавпа илсе килнĕ.

Ун чухне 1944 çулхи август уйăхĕ пулнă.

... Михаил умĕнче кăткăс задача тăнă. Мĕнле пурăнмалла-ха? Мĕн ĕçлемелле? Тата тепĕр ыйту хумхантарнă: Маша мĕнле кĕтсе илĕ? "Кама кирлĕ ĕнтĕ эпĕ çапла", - тесе шутланă вăл урине кассан. Çыру та çырман.

...Ывăлĕн кăмăлĕ ашшĕне куçнă.

- Вĕлерсен лайăхрах пулнă пулĕччĕ, - тенĕ Михаил.

- Ан ухмахлан! - татса хунă ашшĕ. - Пурте лайăх пулĕ.

Кăшт тăрсан Михаил çапла ыйтнă:

- Мĕнле вăл унта?

- Кам? Маша-и? Вăл пирĕн патра кунне темиçе хут та пулать.

- Анчах вăл çакăн пек скере кĕтмест ĕнтĕ.

- Юрататать пулсан, сире нимĕн те кансĕрлемĕ.

* * *

Хĕре килне çитиччен каччăн ăсатмалла-ха ĕнтĕ. Вĕсен вара пачах тепĕр майлă пулса тухнă.

- Акă çитрĕмĕр те санăн килне, - тенĕ Маша. - Эсĕ, Миша, кĕр, кан.

- Эпĕ сана ăсатса яратăп.

- Çук-çук. Çулĕ те халь мĕнле начар тата.

- Юрĕ эппин. Эпĕ кăшт ларăп. Килне çитсен шăхăр.

Хĕр каччă сакă çине лартса алă тытнă та ял вĕçнелле чупнă.

Маша кайсан каччă шухăша путнă. Шухăшĕсем арпашăннă. Вăл пĕччен ларман: çумĕнче костыльсем. Ури ыратнă.

"Мĕнле-ха капла, - шухăшланă Миша. - Иккĕшне валли виçĕ ура. Нивушлĕ Маша мăшăр пулма килĕшĕ?" Вăл унăн сăмахĕсене астăвать: "Миша, ан иккĕлен. Эсĕ мана шанма пултаратăн".

...Шкулта вĕреннĕ чухнех питĕ туслă пулнă çав вĕсем. Кайран çак туслăх юратăва куçнă.

Хатĕрленмелле. Туя хатĕрленмелле.

...Вăрçă хыççăнхи вăхăт пулнипе туя питĕ чаплах туман. Ятарлă купăсçă та пулман. Каччă хăйĕн туйĕнче хăй купăс каланă.

* * *

Миша малтан клуб заведующийĕ пулса ĕçленĕ. Концертсемпе спектакльсене вырăсла та, чăвашла та хатĕрленĕ. Анчах та кунта унăн чунĕ выртман. Вăл бухгалтера вĕренсе тухнă, çирĕм çула яхăн тăван колхозĕнче ĕçленĕ. Килти хуçалăха тĕплĕ йĕркеленĕ, хăйĕн пурнăçĕнче икĕ çурт тунă ...

* * *

Ачисем те ашшĕ-амăшĕ пек ĕçе юратаççĕ. Аслă ывăлĕ мăшăрĕпе пурăнать, ветеринари участокĕн заведующийĕ пулса вăй хурать. Иккĕмĕш ывăлĕ Тури Услонра ĕçлет. Хĕрĕсем Любăпа Надежда Ульяновск облаçĕнче пурăнаççĕ. Прытковсен халь мăнукĕсемпе вĕсен ачисем пур.

- Август пирĕншĕн уйрăмах паллă уйăх, - тет Мария Романовна. Хĕрĕх иккĕмĕш çулхи август уйăхĕнче эпир Мишăпа яланах пĕрле пулма сăмах патăмăр. Август уйăхĕнчех эпĕ ăна салтака ăсатрăм. Каялла вăл августра килчĕ. Çак уйăхрах эпир хамăр çитмĕл çул тултарнине тата ылтăн туя паллă турăмăр.

- Август ятлă учитель пирĕ Александр Жидков çинчен пĕлтерчĕ, - хушса хучĕ Михаил Ефимович.

* * *

...Эпир килти альбома пăхатпăр. Вĕсем кашни сăнӳкерчĕк çинчен каласа параççĕ.

- Ку çар çынни кам вара? - тесе ыйтатăп.

- Прытковсен йăхĕнче тĕрлĕ професси çыннисем пур, - тет Михаил Ефимович. - Ку вăл манăн аслă пиччен Семенăн Володя ывăлĕ. Халĕ вăл генерал-майор, Атăл тăрăхĕнчи çар округĕн штабĕн начальникĕн çумĕ пулса ĕçлет.

- Эпĕ Прытковсене Çĕнтерӳ Кунĕпе саламласа сывпуллашрăм.

**Ф.САВГАЧЕВ.**

## СЫВЛĂХ СТРАНИЦИ



# Мĕн чухлĕ пурăнасси хамăртан килет

Нумай çул хушши чирлемесĕр пурăнас тесессĕн мĕн тумалла-ха? Çут çанталăк саккунĕсене çирĕп пурнăçласа пымалла. Ку вара - çапла калани - мĕне пĕлтерет? Çут çанталăк çынна вăтамран 120-150 çултан кая мар пурăнмалла тунă. Анчах этем хăйĕн çур ĕмĕрне те лайăххăн, çирĕп сывлăхлă пурăнса ирттереймест, вăхăтсăр вилсе выртать. Мĕншĕн?

Малтанах çакна калас пулать. Çын тĕрĕс мар апатланнине пула вăхăтсăр хавшама тытăнать: юн тымарĕсене, ăш-чикри тĕрлĕ органсене, шăмăсемпе сыпăсене, ÿт-тире - пĕтĕм организма вăхăтсăр ватăлтарать, юрăхсăра кăларать.

Çыннăн пĕрремĕш тăшманĕ вăл - ытлашши çуллă апат çини. Уйрăмах ку хур-кăвакал, чăх, сысна, сурăх, лаша какайĕнчи çăва пырса тивет. Выльăх-чĕрлĕх çăвĕ малтанах юн тымарне сыпăçать, унтан хăпмасть. Çуллă чашăк-тирĕке сивĕ шывпа çусассăн çу каймасть вĕт - кунта та çавăн пек. Çапла вара кунран-кун, çултан-çул çури холестерин юн тымарсен ăшне вырнаçса, тачкалса, кайран хытса-чулланса ларать. Юн тымарĕн шал енĕ вара пĕчĕкленет, юн уйрăмах пуç миминчи, чĕрери клеткăсене çителĕклĕ таран пыма пăрахать. Çакна пула атеросклероз чирĕ пуçланса каять.

Çак чир каярахпа ытти йывăр чирсем патне илсе пырать: чĕре инфаркчĕ, пуç мими шалкăмĕ тата ыттисем. Ку çеç те мар. Çуллă апатланакан çыннăн часах рак та пуçланма пултарать. Мĕншĕн? Çу организмри пур клеткăсене те ытлашши тулса ларать, лешсем вара йÿçме тытăнаççĕ. Çакна пула клеткăсем йăнăш, питĕ васкавлăн, çитĕнсе çитмесĕрех татти-сыпписĕр пайланма пуçлаççĕ. Çакă вара ракăн малтанхи палăрăмĕ пулать те. Ку тапхăр клеткăсемшĕн питĕ хăрушă. Ÿсентăран (хĕвел çаврăнăш, кукуруза, соя, măйăр тата ыттисем) çăвĕсем вара, пачах урăхла, организмшăн сиенлĕ мар. Вĕсем атеросклерозпа рак чирĕсене ямаççĕ, юн тымарĕсем таса пулаççĕ, шăмăсемпе ÿт-тире шлак çыпăçмасть.

Эпир çапла калатпăр: 35-40 çулсенчи çыннăн ытлашши çуллă апат çинипе юн тымарĕсем кирлĕ мар япаласемпе тулса ларнă пулсассăн, вăл - 75-80 çулсенче, 75-80 çулсенчи юн тымарĕсем таса-тăк - вăл 35-40 çулсенче. Çакна манмалла мар.

Сывлăхшăн иккĕмĕш тăшман вăл - апатпа пĕрле тăвар нумай çини. Çынна вăтам шутпа тăвар талăкра 5-6 грамран мала кирлĕ мар. Эпир вара 50-60 грамм е ытларах та çиетпĕр. Тăвар нумай çинине пула организмра клеткăсем пĕрĕнеççĕ, ватăлаççĕ. Тăвар юна сăрхăнса кĕнĕ май шыв нумай ĕçмесĕр те пÿтекесем витĕр шăк пулса тухаймасть. Çыннăн вăтам шутпа юн 4-5 литр çаврăнса çÿрет пулсан, тăварлă çиекенĕн вара 3-4 литр шыв юнпа хутшăнать, унпа пĕрле организмра çаврăнса çÿрет. Çакă уйрăмах гипертони чирĕпе асапланакансемшĕн питĕ йывăр. Юн тымарĕсем, уйрăмах ватăраххисем, çурăлса кайма пултараççĕ, ун хыççăн вара шалкăма кĕт.

Пылакпа ашкăнни те çынна ырри патне илсе пымасть. Сахăр-песук, тĕрлĕрен канфет, печени-премĕк çынна усă памаççĕ. Вĕсенче çынна кирлĕ япаласем çукпа пĕрех. Пылака ытларах çисен çав япаласем организмра каллех çăва куçаççĕ, çын вара мăнтăрланса пырать. Çакăн пек рафинадлă углеводсем организмра 40 процента яхăн шлака куçаççĕ, пыршăлăхра çыпăçса, хытса лараççĕ. Вара пыршăлăх çумне вырнаçнă органсем (шăк хăмпи, пÿтеке, ар органĕсем, хырăмлăх, пĕвер тата ыттисем) чирлеме тытăнаççĕ. Çак органсем пыршăлăха тасатмасăр та сывалма пултараймаççĕ.

Пыл тата пыл хурчĕсен продукчĕсем (прополис, чечек çăнăхĕ, пыл хурчĕн сĕчĕ, ăвăс) вара, пачах урăхла, питĕ усăллă, унта çынна кирлĕ япаласем 70 ытла. Çав шутра - мĕнпур витаминсем, ферментсем, Менделеев системинчи элементсем, минераллă тăварсем, органикăлла япаласем тата ыттисем. Пыл вăл - çутçанталăкăн универсаллă эмелĕ. Çынна пур чиртен те чĕрĕлме пулăшакансем. Вăл организмра 99,8 процент чухлĕ ирĕлет, каяш хăвармасть.

Анчах пылпа тĕрĕс усă курма пĕлмелле, ăна е уйрăммăн, ытти белоклă апатсемпе хутăштармасăр, е апат умĕн 20 минут малтан пĕрер кашăк шывра ирĕлтерсе ĕçме юрать. Пыл нерв системине лăплантарать, çывăрас умĕн ăна пĕр кашăк ĕçсе выртсан, ыйхă уйрăмах лайăх килет. Ыратакан сыпăксене пылпа компресс туса сиплеме пулать. Мунчара ÿте сĕрни те усăллă. Пыл çинĕ хыççăн шăнма юрамасть.

Çыннăн апат-çимĕç рационĕнче пахча çимĕç тата ÿсентăран продукчĕ ытларах пулмалла. Çапла тусассăн çын сывлăхлă пулать, тĕрлĕ чир-чĕр айккине пăрăнать, ĕмĕр вăрăма тăсăлать. Çулла, кĕркунне пахча çимĕç уйрăмах нумай, пыл та пур.



Пахча çимĕç, улма-çырла мĕнрен усăллă-ха? Тĕслĕхсем илсех кăтартасшăн. Панулми апата лайăх ирĕлтерме пулăшать, юнри холестерина чакарать; лимон шăмăсемпе ÿт-тире çирĕплетет, унра С витамин нумай пулнă май организма инфекциллĕ чирсенчен сыхлать; кишĕр куçшăн питĕ усăллă, чĕрене лайăх ĕçлеттерет, рак чирĕсене хирĕç кĕрешме пулăшать; ыхра - çутçанталăк антибиотикĕ, юнри холестерина чакарать, юн тымарĕсене тĕрлĕ чир-чĕртен хăтарать, уйрăмах вĕсем сарăлса каясран сыхлать; банан хырăмлăхри язăран сыхлать, ăна аталанма-сарăлма памасть; пăрса йышши ÿсентăрансем юнри сахăра тата холестерина чакараççĕ; апельсинра С витамин нумай, шăл тунипе юн тымарĕсене çирĕплетет; слива микробсене пĕтерме пулăшать; çĕрулминче кали тăварĕсем нумай, пыршăлăха лăплантарать, чĕре мышцисемшĕн усăллă; суханра та çынна усăллă япаласем питĕ нумай.



Çапла, асăннă пахча çимĕçсем сывлăхшăн питĕ усăллă, вĕсене кашни кунах çиме тăрăшмалла. Çакă вăл организма тĕрлĕ чир-чĕртен сыхлать, организм хăй кăларакан эмелсемпе сипленме пулăшать.

Çын организмĕ тĕрлĕ эмел туса кăларать. Вĕсене шутласа та пĕтерме çук. Акă, кашни кунах физзарядка тусассăн, 5-6 çухрăм утсан е чупсассăн, пуç миминче çынна хавхалантаракан эмелсем (эндорфинпа энкедаллин) тухма тытăнаççĕ. Çапла вара кăмăл лайăхланать. Организм çирĕп пулсассăн вăл хăйне сипленме кирлĕ эмелсене хăех туса кăларать, синтетикăлла эмелсене укçа парса илме те кирлĕ мар.

Таса эрех е спирт организма талăкра хĕрĕх грамран мала кирлĕ мар. Табак та калама çук сиенлĕ наркăмăш, çын ĕмĕрне вăтам шутпа 10-15 çул кая мар кĕскетет, тĕрлĕ чирсемпе асаплантарать, инвалида кăларать. Сывлăха упрас тесессĕн, ăна туртма пăрахмалла.

Асăннă канашсене тытса пыма пулать. Паллах, çирĕп кăмăллă пулмалла. Вара ĕмĕр вăрăма тăсăлĕ.

**М.ВАЗАНОВ.**

# ЫЙТУ - ХУРАВ

**Эпĕ юн çителĕксĕррипе аптăратăп. Килте мĕнле сипленме пулать-ши?**

**Е.МАКАРОВА.**

Юн çителĕксĕррине малокрови е медицина терминĕпе каласан, анемия теççĕ. Ку вăл - чир, мĕншĕн тесен юн сахаллипе чи кирлĕ органсене (пуç мимине) кислород çитми пулать. Чирлĕ çын сăнран пăхма шуранка, час-часах пуç çаврăннипе аптăрать, тăнсăр пулса ÿкет, сывлама йывăрланнине туять. Çак чире тухтăрсем юна тĕрĕслесе çеç пĕлме пултараççĕ. Сывалас тесен тÿрех эмелсен пулăшăвне кĕтмелле мар. Тĕрĕс пурăнсан, кирлĕ пек апатлансан, организм хăех вăй илет, юн хушăнать.

Халăх медицини какай, пĕвер ытларах çиме, вăкăр юнне кунне çуршар стакан ĕçме хушать. Услам çу çимелле, çăра сĕте пĕчĕк сыпăксемпе ĕçмелле.

Вир кĕрпи те питĕ усăллă. Сарă кавăнпа хутăштарса пĕçерме хушаççĕ ăна. Пахча-çимĕç, çĕр çырли, хăмла çырли, банан, măйăр, сухан, ыхра çимелле.

Организмра юн хушăнтăр тата вăл çăралтăр тесен çапла тума сĕнетпĕр.

* Кашни ир апат умĕн 100 грамм хыркăçланă кишĕре хăймапа е тип çупа хутăштарса çимелле;

* Апатра арбуз, дыня, купăста, шăлан çырли çиме сĕнетпĕр;

* Йÿç кăшмана, ăна çĕр ăшĕнчен туртса кăлармасăрах чавса шăтăк тăваççĕ, унта сĕткĕн пухăнасса кĕтеççĕ, кайран пĕчĕк кашăкпа ĕçмелле;

* Кишĕре, хĕрлĕ кăшмана, йÿç кăшмана хыркăçламалла. Кашнине пĕр пек илмелле те хура кĕленчене ярса лартмалла. Унтан çак кĕленчене чустапа сĕрсе тухмалла, анчах пăккине питĕ вăйлă питĕрмелле мар, кĕленчери пăс тухма пултартăр. Чуста ăшне хупнă кĕленчене духовкăна 3 сехете лартмалла, пĕчĕк çулăм çинче сĕткен пăспа пиçтĕр.

Çак сиплĕ сĕткене кунне виçĕ хут апатчен пĕрер кашăк ĕçмелле. Çапла виçĕ уйăх сипленмелле.

* Пĕр кашăк ыхрана пылпа хутăштарса пĕçермелле те апат умĕн ĕçмелле.

Çитĕннисен çакăн пек те сипленме юрать.

Хĕрлĕ кăшмана хыркăçласа кĕленчене тултармалла, унта эрех ярса 12 кун ăшă çĕрте тытмалла. Унтан апат умĕн пĕрер черкке ĕçмелле.

* Алоэ курăк сĕткенне 150 грамм, 250 грамм пыл тата 350 грамм кагор илсе хутăштармалла, кунне виçĕ хутчен апат умĕн пĕрер кашăк ĕçмелле.

**Елена КРЫЛОВА.**

*** Ешĕл аптека**

# Алă айĕнче пулмалла

***Килти ешĕл аптекăра чи малтанах мĕнле сиплĕ курăксем пулмалла-ха? Паллах, миххи-миххипе типĕтсе тултараймастăн ĕнтĕ. Кунта та виçе кирлĕ. Мĕнле ÿсентăран пухасси сирĕн сывлăхран килет. Пÿре чирĕпе аптракансене пĕр тĕрлĕ, диатезлисене тепĕр тĕрлĕ курăксем пулăшаççĕ. Çапах та шăнса пăсăласси, гриппа чирлесси е вар-хырăм пăсăлнипе аптăрасси кашнинех пулма пултарать. Килти ешĕл аптекăна та çакна шута илсе йĕркелемелле. Унта çак эмел курăкĕсем пулччăр:***



эмел курăкĕ е эрех курăкĕ, шак курăкĕ (ромашка аптечная) - чечекĕ;

сар çип ути (зверобой) - курăкĕ тата чечекĕ;

пĕтнĕк (мята перечная) - курăкĕ тата чечекĕ;

мелисса - курăкĕ тата чечекĕ;

матрÿшке (душица) - курăкĕ тата чечекĕ;

çăка (липа) - чечекĕ;

шапа хупаххи (мать-и-мачеха) - çулçи;

шур тăраллă хыт курăк, мулкач курăкĕ (тысячелистник) - курăкĕ тата чечекĕ;

вĕлтрен (крапива двудомная) - çулçи;

календула - чечекĕ;

шăнăр курăкĕ (подорожник большой) - çулçи;

чĕре курăкĕ (пустырник) - курăкĕ;

кушак курăкĕ (валериана) - тымарĕ;



юман (дуб) - хуппи;

сысна курăкĕ (спорыш) - курăкĕ;

хурăн (береза) - çулçи;

сарă кушак ури (бессмертник песчаный) - чечекĕ.

# "Кашни çурт - коттедж мар"...

**Кăçалхи апрелĕн 15-мĕшĕнче пичетленĕ хаçатăн 41-мĕш номерĕнче хула тата район прокурорĕпе А.П.Евграфовпа иртттернĕ интервью пичетленине вулакансем асăвaççĕ пулĕ. Унта Нурлат хулинчи уйрăм çуртсене учета илессин, регистрацилессин, хакласcин, налук хурассин требованийĕсене пурнăçланин шайĕ çинчен çырнăччĕ. Ун чухне эпир ку тема тепĕр хут хускатса, çак калаçăва хула влаçĕсемпе налук инспекцийĕн ĕçченĕсене явăçтарма шантарнăччĕ... Çакна тĕпе хурса пирĕн корреспондент хальхинче Нурлат районĕн тата Нурлат хула администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕпе Р.Г.БИЛАЛОВПА тĕл пулса ăна хăш-пĕр ыйтусем çине хуравлама ыйтнă.**

***- Равиль Габдрахманович эпир сӳтсе явакан ыйтусене тивекен Тутарстан Республикин Президенчĕн паллă Указĕ уйрăм çурт-йĕр тăвассине аталантарас, çаплах çав ĕçсенче йĕрке тăвас тĕлĕшпе чылай ыйтусем палăртнă. Ку тĕлĕшпе пирĕн хулан мĕнле малашлăхĕсем пур?***

- Малтан йĕрке çинчен. Район прокуратури тĕрĕслев ирттерсе уйрăм çуртсем тăвас тенсене çĕр участокĕсем уйăрса парассинче йĕркене хытă пăснине палăртман. Анчах та строительствăн вăхăчĕсене тата унта пурăнма куçас срока тăснă тĕслĕхсем пулаççĕ, паллах, çакăн сăлтавĕ пур ĕнтĕ, укçа-тенкĕ енчен йывăрлăхсем пулни (çурт тăвакан, договор тунă хыççăн тенĕ пекех, çĕршĕн налук тӳлеме тытăнать вĕт). Çакăншăн эпир явап тыттарма пултаратпăр-и, мĕншĕн тесен ĕç укçине вăхăтлă памаççĕ, çаплах строительство материалĕсем те питĕ хаклă. Указра та уйрăм çуртсене туса пĕтерессин нормативлă срокне 5 çула çити тăснă.

***- Апла пулсан, Равиль Габдрахманович урăхла ыйту: уйрăм çуртсене хăвăртрах туса пĕтерччĕр тесе пирĕн влаçсем мĕнле мерăсем йышăнаççĕ? Эпĕ коммуникаци çинчен калас тетĕп. Çĕнĕ çурта пурăнма куçнисен хăшпĕр чухне шывсăр, канализацисĕр, газсăр пурăнма тӳр килет.***

- Чи малтан çакна палăртса хăварас килет, уйрăм çурт-йĕр тăвассине аталантарас ыйтусем хула, район администрацийĕн малашнехи планĕсенче уйрăм вырăн йышăнаççĕ, анчах та вырăнти бюджета çакна кирлĕ чухлĕ укçа-тенкĕпе тивĕçтерме йывăр-ха. Апла пулин те пирĕн нумай çул хушши пухнă опыт пур, предприятисемпе организацисем хулан социаллă инфраструктурине аталантарас тĕллевпе укça уйăраççĕ. Нурлатăн çĕнĕ микрорайонĕсенче ют çынсем килсе çуртсем хăпартмаççĕ вĕт...

Юлашки çулсенче хулара тăвата çĕнĕ микрорайон ӳссе ларчĕ, кусем - Хĕвеланăçĕнчи (халăхра ăна афган поселокĕ теççĕ), Хĕвелтухăçĕнчи (СПТУ), çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи (РОВДăн çĕнĕ çуртне тăвакан çĕрте) тата Çурçĕр енчи (Чистай трасси патĕнче). Нумаях пулмасть тума тытăннă микрорайонсемсĕр пуçне, çынсем тахçантанпах пурăнакан, иккĕшĕн çинче чарăнса тăрас килет, кусем вĕсем Хĕвеланăçĕнчи тата Хĕвелтухăçĕнчи микрорайонсем, унта пурăнакансен те ыйтусем чылай.

Пĕрремĕшне илес пулсан, хальхи вăхăтра кунта проекта тĕпе хурса электрификацилес тĕлĕшпе чылай ĕç пурнăçланă, поселокри энерги хуçалăхне хулари электросеть балансĕ çине куçарнă. Тепĕр "чи çивĕч" ыйту вăл - шывпа тивĕçтересси. Кунта хăйне шантаракан самантсем пур: проект тума панă, урамсене шыв кĕртме пăрăхсем хатĕрленĕ. Хирти Мамăкран артезиан шывĕ килĕ, унта хушса 3 скважина пăраланă. Анчах та çивĕчрен те çивĕч ыйту вăл - газификацилесси. Малтанлăха проект кирлĕ, ăна тума заказ панă. Кунта пурăнакансем вара хăйсем пуçарулăх кăтартнине те палăртса хăварас килет. Вĕсем газ кĕртес тĕлĕшпе поселок советне йĕркеленĕ те ĕçе хăвăртлатас тĕллевпе укçа пухса проекта сутăн илĕç. Çавăн хыççăн вара 1998 çулта афган поселокĕнчи урамсенчи пăрăхсене камсем хывассине палăртĕç. Кунта кĕрекен çулсене тăвассине хулан пĕрлехи планне кĕртнĕ. Çӳлерех каланăччĕ ĕнтĕ, ку ĕçсене предприятисемпе организацисен, тĕпрен илсен, 127-мĕш номерлĕ куçса çӳрекен механизациленĕ колонна вăйĕпе пурнăçлĕç.

Халь вара хĕвелтухăçĕнчи СПТУ поселокĕ çинчен. Электрификацилеме проект пур, трансформатор подстанцине вырнаçтарас ĕçе ДРСУ пурнăçлĕ. Микрорайонти уйрăм çуртсене çутăпа хулари сеть тивĕçтерĕ. Çапах та газификаци. Газ кĕртме планлаççĕ, ведомствăна пăхăнса тăракан çуртсене вара предприяти укçа тӳлемесĕр кĕртмĕç, уйрăм çуртсенче пурăнакансен те электрификациленĕ чухнехи пекех кăшт тӳлемелле.

***- Канализаци тĕлĕшпе ĕçсем мĕнле?***

- Хальхи канализаци сечĕсем хăйсем çине хушма ĕç илеймеççĕ, мĕнле калас, вĕсем халь те тулли хăватпа ĕçлеççĕ. Çавăнпа та канализаци коллекторĕ валли халь çĕнĕ проект ĕçлесе хатĕрлеççĕ, вăл хĕвелтухăçĕнчи, çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи, çурçĕрти микрорайонсенче канализаци трассисене тивĕçтерĕ, çаплах ун чухне вара халь ĕçлекеннине те çăмăлрах пулĕ. Çак ĕçе пурнăçласан кăна асăннă микрорайонсене шыв кĕртесси çинчен калаçма пулать.

***- Çĕнĕ микрорайонсене централизациленĕ майпа ăшăтасси çинчен вара пĕр сăмах та пулмарĕ...***

- Ун çинчен калаçмаççĕ те. Халь пурте газ кĕртессишĕн тăрăшаççĕ, унччен вара мĕнле ăшăнасси çинчен кашни кил хуçин хăйĕн шухăшламалла пулать.

***- Равиль Габдрахманович, эпир хулара пурăнакансен пурнăçне тивĕçтерекен чи çивĕч ыйтусене хускатрăмăр пулсан, эсир "Сельхозтехника" микрорайонне ăшăпа тивĕçтерес лару-тăру кăшт та пулин лайăх енне улшăннипе улшăнманни çинчен калаймастăр-и? Унта пурăнакансем хĕлле сивĕпе тарăхнине редакцие янă çырусем те, телефонпа шăнкăравланисем те çирĕплетеççĕ. Хулан тепĕр енчен - МСО микрорайонĕнчен вара шыв çук тесе жалобăсем килеççĕ...***

- Хĕл вĕçленнĕ чухне хула Совечĕ, ăша сечĕсен, "Сельхозтехника" представителĕсем хутшăннипе техника советĕнче çакăн пек мерăсем палăртрĕ: пĕрремĕшĕнчен, поселокри çуртсене ăшăпа тивĕçтерессине предприятин промышленноçпа техника базинчен уйăрмалла, иккĕмĕшĕчен, кунти çуртсене НПТС 2-мĕш номерлĕ котельнăйĕпе (машинăсем тăвакан завод) çыхăнтармалла. Кĕскен каласан, ку ĕçе хутса ăшăтмалли çĕнĕ сезон пуçланиччен пурнăçлама "Сельхозтехника" АО хушнă. Шывпа тивĕçтерессинче лайăх енне улшăнусем пулĕç, мĕншĕн тесен эпир МСО микрорайонĕнче пăраланă артезиан скважинине шанатпăр. Халь вăл вăхăтлăха палăртнă схемăпа ĕçлет, кунти шывпа микрорайонти нумай хутлă çуртсенче пурăнакансем усă кураççĕ ĕнтĕ, сахăр завочĕн поселокĕнчи çĕнĕ Дачная, Карбышев, Дачная-2, Солнечная урамсене те шыв çавăнтан пырĕ. 547-мĕш номерлĕ куçса çӳрекен механизациленĕ колоннăн вара çав шыв пăрăхне туса пĕтерме тăрăшмалла.



Çак самантпа усă курса, вăрман склачĕн микрорайонĕнче пурăнакансене шантарас тетĕп: кунта артезиан скважинине пăраланă, шыв башнине вырнаçтараççĕ, вăрман склачĕн вăйĕпе шыв пăрăхĕсем хываççĕ.

***- Пирĕн калаçуран кашни хăйне валли хурав тупрĕ пулĕ тесе шутлатăп. Палăртнисем пурте пурнăçланччăр темелли кăна юлать. Ун чухне вара Нурлатра çĕнĕ çурт уявĕсем тăвакансен шучĕ те ӳсĕ. Çĕнĕ çуртра пурăнма тытăннă çын вара БТИ, налук службисенчен пăрăнмĕ. Мĕншĕн тесен ăна хăçан та пулин пурпĕр тӳлемелле вĕт. Апла пулсан, кунта ăна влаçсем пулăшма тивĕç. Тутарстан Республикин Президенчĕн Указĕ те çавăн çинченех...***

**Д.ТЯМАЕВА**
**калаçнă.**

# Пур енлĕн хакланă

Апрелĕн 24-мĕшĕнче И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче Аслă вĕрентекенĕмĕрĕн 150 çулхи юбилейне халалланă "И.Я.Яковлев тата хальхи нумай нациллĕ обществăн ăс-хакăл тĕнчи" темăпа халăхсем хушшинчи ăслăлăх конференцийĕ иртнĕ. Унта ЧР правительствин членĕсем, ученăйсем, преподавательсем, учительсем, студентсем, аякран килнĕ хăнасем хутшăннă. Тухса калаçакансем чăваш патриархĕн тăван халăхĕшĕн тунă ĕçĕ-хĕлне тĕрлĕ енчен хак парса чысланă. ЧР вице-президенчĕ, Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Л.П.Кураков И.Я.Яковлевăн чăвашсемшĕн ĕçлесе ирттернĕ пурнăçне чăн-чăн паттăрлăхпа танлаштарнă, унăн педагогика еткерĕн тĕнче шайĕнчи пĕлтерĕшне палăртнă. ЧПУ Иван Яковлевич халалĕсене асра тытса, вĕрентӳпе ăслăлăхра унăн еткерĕпе усă курса, пурнăçа кĕртсе пурăнни çинчен каланă.

Раççей Наукăсен академийĕн чăн членĕ Г.Н.Волков, университетри И.Я.Яковлев институчĕн директорĕ Г.Н.Краснов, Н.П.Петров профессор докладсем тунă, хăнасем тухса калаçнă. Конференцие хутшăннисен ячĕпе О.Н.Викторов ертсе пыракан делегаци И.Я.Яковлевăн наци библиотеки тĕлĕнчи палăкĕ умне чечексем хунă.

Пленарлă лару хыççăн конференцие хутшăннисем университетра, педагогика институтĕнче, гуманитари наукисен институтĕнче секцисем çине пайланса ĕçленĕ. Секцисенче "И.Я.Яковлев тата паянхи вĕрентĕвĕн çивĕч ыйтăвĕсем", "И.Я.Яковлев тата Уралпа Атăл тăрăхĕнчи халăхсен историйĕ", "И.Я.Яковлев тата наци чĕлхисемпе литературисем аталанни", "И.Я.Яковлев тата хальхи наци культури", "И.Я.Яковлевăн наукăпа педагогикăри еткерĕ тата паянхи пурнăç" темăсене пур енлĕн çутатнă.

**("Хыпар" хаçатран).**


# Пĕлтерӳсем

*Хăвăрăн материалăртан çуртсем, гаражсем тăватпăр (паха). Телефон: 5-16-25, Назипа ыйтмалла.*

* * *

*Хăнтăрча патĕнчи пахчаçăсен "Коммунальник" юлташлăхĕнче дача сутăнать. Телефон: 2-21-68.*

* * *

*1990 çулта Францире туса кăларнă ВАЗ-21083 "Карлотта" сутăнать. 5 пусăмлă КПП, хакĕ пирки калаçса татăлма пулать. Адрес: Школьная урамĕ, 11-30, 18 сехет хыççăн пымалла.*

* * *

*Щиплă çурт комплекчĕ сутăнать. Телефонсем: 3-31-11 (килти), 2-19-76 (ĕçри).*

* * *

*Хиртикӳл ялĕнче çурт сутăнать. Адрес: Заводской тăкăрлăкĕ, 7-17.*

* * *

*Тĕттĕм хăмăр тĕслĕ, çăмламас кавказ овчарки çухалнă, 1,5 çулта. Вăл ăçтине пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Ленин урамĕ, 18-2. Телефон: 2-24-38.*

# Юратнă юрăсем...

Вăл Самарта музыкăна юратакан çемьере çуралнă, ашшĕ Павел Иванович баян каланă, амăшĕ Анна Алексеевна юрланă, кĕçĕн шăллĕпе Наташа та пĕчĕккĕллех юрлама юратнă. Наташăн сасси таса та вăйлă, янăравлă пулнă. Пĕрремĕш ăнăçлăха вăл питĕ ир, шкулта вĕреннĕ чухнех тунă. Вăл ятарлă пĕлӳ туянман, хăй ĕçлекен 6-мĕш номерлĕ шкул-ача садĕнче те вăл ачасеңе вулама, çырма, математика тата рисование вĕрентет, юрлама вара специалист хăнăхтарать, анчах та нумай çул хушши ĕнтĕ Наталья Митрофанова хутшăнмасăр пĕр концерт та иртмест. Пултарулăх енчен вăл юлашки çулсенче питĕ ӳсрĕ. Кашни юрра чунне парса, ăнланса юрлать. Унăн хăйĕн репертуарĕ пур. Вăл хăй юратнă юрăçăсем юрлакан юрăсене итлет, вĕсем пек юрлама вĕренме тăрăшать, çĕнĕ юрăсем юрлать... Наталья Митрофанова уйрăмах халăх юррисене кăмăллать. Вăл çаплах смотрсемпе зонăри конкурссене, республикăри фестивальсене хутшăнать. Çак çулсем хушшинче вĕсем мĕн чухлĕ пулнине шутласа кăлараяс çук, малти вырăна йышăнакансен хушшинче те унăн ятне пĕр хутчен кăна мар асăннă. Çулсем иртнине пăхмасăр вăл ватăла пĕлмест, яланах çамрăк пулма тăрăшать, çынсене савăнăç парнелет. Наталья Митрофанова Людмила Зыкинан, Екатерина Шавринан тата Надежда Кадышеван творчествине юратать. Анчах та Надежда Бабкинана кăмăлламасть.

Наталья "Чиркӳ умĕнче карета тăратчĕ..." юрра юрлама юратать. Ку вăл хĕрача шăпинчи пăшăрхантаракан самант, юратман çынпа унăн венчете тămалла вĕт. Наталья каланă тăрăх, ку юрра Çĕпĕрте тахçанах хывнă, унăн тата темиçе сăвă пур... Мĕн çинчен? Паллах, вĕсем те юрату çинчен пулĕ.



Т.АЛЕКСЕЕВА.

# Сĕтел çинчи теннис

Апрелĕн 26-мĕшĕнче районта сĕтел çинче теннисла выляс тĕлĕшпе уйрăм тата команда ăмăртăвĕсем иртрĕç.

Виçĕ арçынпа икĕ хĕрарăмран тăракан НУРБăн "Нефтяник" командипе танлашаканни çукчĕ. Командăна çаксем кĕнĕччĕ: Н.Абдуллин, А.Климов, И.Камалов, Т.Климова, О.Матавина.

НУРБ командине пĕр хут выляса ярса, НГДУ "НН" иккĕмĕш вырăна тухрĕ. Зузеевăри нефть промыслин команди икĕ хут выляса ярса виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Уйрăм ăмăртура хĕрарăмсем хушшинче Т.Климова (1-мĕш номерлĕ шкул) финалта Я.Павловпа (Мамăкри вăтам шкул) выляса çĕнтерӳçе тухрĕ. Виççĕмĕш вырăна Н.Багаева (Мамăкри вăтам шкул) йышăнчĕ. Çурма финалта И.Камалов (НУРБ) Т.Бадыгина (музыка шкулĕн директорĕ), А.Климов (1-мĕш номерлĕ шкулта физкультурăпа вĕрентекен) В.Шугаева (НГДУ "НН") çĕнтерсе финала тухрĕç.

Финал питĕ интереслĕ пулчĕ. Юлашкинчен И.Камалов А.Климова çĕнтерчĕ. Нурлат районĕн пĕрремĕш ракетки ята тивĕç пулчĕ.

**Х.ФАТУЧЕВ.**

*Улах юррисем*

## Пĕчĕккĕ те лаша, турă лаша

Пĕчĕккĕ те лаша, турă лаша
Хуллен-хуллен юртса çул илет.
Айванах та пуçăм, çамрăк чунçăм
Шухăшла-шухăшла ăс илет.

Юнашар та йăран-çарăк, сухан,
Илемлĕччĕ ешĕл вăхăтра.
Ай-хаях та пуçăм, айван чунăм,
Илемлĕччĕ çамрăк вăхăтра.

Икĕех аллăмра, ай, хут купăс,
Тухрăм аслă урама калама.

Купăс хĕлĕхĕсем, ай, ылтăн мар,
Пирĕн çамрăк ĕмĕр иккĕ мар.

Аслати авăтать, çиçĕм çиçет,
Кунĕн-çĕрĕн çумăр çăвасшăн.
Чун савниййĕм йĕрет, куçне шăлать
Ĕмĕр-ĕмĕр пĕрле пурăнасшăн.

Чĕмпĕртен те илнĕ чĕчĕ тихи
Ут пулаймĕ тесе ан калăр.
Пуçăмах та çамрăк, чунçăм айван,
Çын пулаймĕ тесе ан калăр.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.**

## ПĔЛТЕРӲСЕМ

**Тукай урамĕнчи 31-мĕш çурт сутăнать.**

* * *

**ВАЗ-21213 "Нива" а/м сутăнать. 5-12-34 номерлĕ телефонпа 18.00 сехет хыççăн шăнкăравласа пĕлмелле.**

* * *

**Тасатакан сооруженисем патĕнче дача сутăнать. Телефон: 2-22-36 (ĕçри), 65-3-02 (килти).**

* * *

**Хуралтăвĕнче дача участокĕ сутăнать (3х4 метрлă кирпĕчрен тунă çурт, 5 тĕм хурлăхан, хăмла çырли тĕмĕсем пур). Телефон: 5-25-48.**

* * *

**1997 çулта туса кăларнă ВАЗ-2106 сутăнать. 6000 километр çӳренĕ. Тĕрнеç ялĕнчи Александр Даниловран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Лайăх шайри "Москвич-Комби" сутăнать. Тĕрнеç ялĕнчи Александр Киселевран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Лайăх шайри "Муравей" мотороллер сутăнать. Тури Нурлат ялĕнчи Шарифулла Мухаметьяровран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**Усă курнă стенка, кравать, холодильник сутатпăр, лайăх шайра. Адрес: Школьная урамĕ, 90.**

* * *

**1978 çулта туса кăларнă ВАЗ-2101 сутăнать. Хакĕ 7 пин тенкĕ. Çуткӳл ялĕнчи Ильдар Валитовран ыйтса пĕлмелле.**

### Модăсен ателйинче юсатпăр:

**- холодильниксем, кĕпе-йĕм çумалли машинăсем;**
**- çĕвĕ машинисем тата ытти йăла техники.**
**Адрес: К.Маркс урамĕ, 8-мĕш çурт.**

**Коопзаготпром территорийĕнче (Куйбышев урамĕ, 98) выльăх сутакан пасар ĕçлет. Ĕç вăхăчĕ: 6 сехетрен тытăнса 12 сехетчен, эрнекун, шăматкун, вырсарникун.**

# Пĕлтерӳсем

**"Москвич-2141" сутăнать (двигателĕ 06 жигулин, 5 пусăмлă КПП), "форель" тĕслĕ. Телефон: 2-20-44, 19 сехет хыççăн шăнкăравламалла.**

* * *

**Çĕнĕ Элметри вăтам шкул 1988 çулта Фарида Ахметовна Якупова ячĕпе панă А 477388 номерлĕ аттестата тĕрĕс мар тесе шутламалла (1991 çулта çунса кайнă).**

* * *

**Виçĕ пӳлĕмлĕ хваттер сутăнать. Адрес: Московская урамĕ, 5-45, 17 сехет хыççăн пымалла.**

* * *

**Çемье пĕр е икĕ пӳлĕмлĕ хваттер тара илетпĕр. Çулталăкшăн тӳлеме шантаратпăр. Телефон: 2-17-17.**

* * *

**Холодильниксене килĕртех юсатпăр. Телефон: 5-41-19.**

* * *

**6х14 метрлă пурăнмалли çурт сутăнать, хуралтăсем, 27 сотка çĕр участокĕ, касса çурнă вутă, пăтасем пур. Чулшан ялĕнчи Бахтияровран ыйтса пĕлмелле.**

* * *

**СПТУ патĕнчи гаражлă çĕр участокĕ сутăнать. Телефон: 2-10-60.**

* * *

**Нефтяниксен урамĕнчи приватизациленĕ виçĕ пӳлĕмлĕ хваттере (60,8 тăваткал метр) 2 тата 1 пӳлĕмлĕ хваттерсемпе улăштаратпăр. Телефон: 5-15-27, хăть хăш вăхăтра та шăнкăравлама пулать.**

* * *

**Пăсмалли 9х10 метрлă çурт сутăнать. Адрес: Победа урамĕ, 12. Телефон: 5-10-79.**

* * *

**Апат-çимĕç комбиначĕ патĕнчи дача сутăнать. Адрес: Советская урамĕ, 11.**

* * *

**Александр Константинович Федоров ячĕпе панă водитель удостоверенине тупакана тавăрса пама ыйтатăп. Адрес: Гагарин урамĕ, 6-8.**

* * *

**Пĕр пӳлĕмлĕ хваттер (К.Маркс проспекчĕ, çĕнĕ çурт), усă курнă 40 диаметрлă пăрăхсем сутатпăр. Телефон: 2-14-15.**

* * *

**АОГВ-29 газ хуранĕ, "Мир" холодильник сутатпăр, хаклă мар. Телефон: 2-22-49, 16 сехет хыççăн шăнкăравламалла.**

* * *

**Туса пĕтермен гараж сутăнать, хаклă мар. Адрес: Советская урамĕ, 187-77.**

* * *

**"Алмалык" патĕнче дача участокĕ сутăнать. Телефон: 2-24-47.**

* * *

**Кивĕ сад пахчи сутăнать, улма-çырла нумай пулать, хаклă мар. Телефон 2-26-50.**

* * *

**Çĕнĕ мотоблок сутăнать. Телефон 2-18-43.**

* * *

**Лермонтов тăкăрлăкĕнчи çурт сутăнать. Телефон: 5-25-94.**

* * *

**Икĕ камерăллă çĕнĕ "Юрюзань" холодильник сутăнать, хаклă мар. Телефон: 5-26-42.**

* * *

**61-мĕш номерлĕ шкул патĕнче участок сутăнать. Телефон: 2-11-13.**

* * *

**Красин урамĕнчи 10-мĕш çурт сутăнать. Адрес: Чаллăпуçĕ, Луговая урамĕнчи 11-мĕш çурт.**

* * *

**"ЗАЗ-968" автомобиль (40 л.в.) тата Некрасовкăра дача сутăнать. Телефон: 2-17-32.**

* * *

**"Мечта" пахчаçăсен юлташлăхĕнче дача сутăнать (6 сотка). Телефон: 5-42-24, Танзиляна ыйтмалла.**

* * *

**Хаклă мар, шурă тĕслĕ "Запорожец" туянатăп. Телефон: 5-16-25.**

* * *

**1990 çулта туса кăларнă ВАЗ-21083 а/м сутăнать. 5-22-39 номерлĕ телефонпа 17.00 сехет хыççăн шăнкăравламалла.**


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хут тухать - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информацийпе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 860.